Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

9 (7754) № ✻ Юн кун, 2010 çулхи февралĕн (нарăс) 10-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче



## Ĕне сăвакан паттăрсем

***Ĕçлекен çеç ыранхи куна пăхай-рать, çĕнĕ технологисене алла илейрет, экономикăна тĕреклетей-рет. Çак чăнлăха общестăлла вы-льăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем пирки пĕр иккĕленмесĕр калама пу-лать. Акă Суворов ячĕпе хисеплене-кен ял хуçалăх производство коопе-ративĕнчи Надежда Николаевна Ор-ловапа Надежда Валентиновна Ми-хайлова дояркăсем – хăйсен ĕçне ответлăха туйса пурнăçлакан чăн-чăн паттăрсем. Иртнĕ çул вĕсем хăйсене çирĕплетсе панă ушкăнри кашни ĕнерен 6485-шер килограмм сĕт суса илсе районти экономика ăмăртăвĕн çĕнтерӳçисем пулса тăнă. «Ĕçлесен ӳсĕмсем нумай кĕттермеççĕ», – терĕç хĕрарăмсем ирхи сăвăмран тухнă май.***

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Районта

## Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕ

Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕпе районти ял хăçалăх производство кооперативĕсенче çулленех выльăх пăхакансем хушшинче экономика ăмăртăвĕ ирттереççĕ. Вăл 2009 çулта та пулчĕ. Çитес эрне кун, нарăс уйăхĕн 12-мĕшĕнче, Муркашри Культура çуртĕнче çав ăмăртăва пĕтĕмлетессипе анлă канашлу пулать. Унта район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕпе пĕлтĕр ĕçре уйрăмах палăрнă ферма коллективĕсемпе уйрăм ĕçченсене чысласси тĕп вырăнта пулĕ.

Ăмăртăва пĕтĕмлетни 2010 çулхи ăмăрту чиккисене те палăртĕ. Каламалла, вĕсем пĕлтĕрхинчен пĕр утăм та кайра пулмĕç. Район пурнăçĕпе тата Муркаш енри ял хуçалăхĕн аталанăвĕпе кăсăкланакансем савăнăçлă тĕл пулăва пырасса шанатпăр.

## Мускавран таврăнчĕç

Нарăс уйăхĕн 2-5-мĕшĕсенче Мускавра тĕнче шайĕнче специализациленнĕ 15-мĕш «Тырă-комбикорм-ветеринари-2010» суту-илӳпе промышленность выставки ĕçлерĕ. Унта ял хуçалăх продукчĕсене туса илес, селекцилес, тирпейлес ĕçри т. ыт. те çĕнĕ технологисемпе паллашма май пулчĕ. Производствăпа пĕрлех экологи тата каяшсене тирпейлесси, хăрушсăрлăх техникипе ĕç сыхлавне пăхăнасси, профессиллĕ чир-чĕр профилактики, кадрсем хатĕрлесси, туса илнĕ продукцие рекламăласси тата реализацилесси – ял хуçалăхĕшĕн паян умра тăракан тĕп ыйтусем.

Асăннă выставка ĕçĕпе паллашма Муркашран та делегаци кайса килчĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ тата ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Ананьев ертсе пычĕ. Делегацире «Моргаушкорм» юлташлăх ертӳçи Д. Анисов, Ильич яч. хис хуçалăх ертӳçи И. Николаев тата хуçалăхăн тĕп агрономĕ Ф. Егоров, Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн председателĕ П. Ефимов, ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен Е. Андреев яч. хис. хуçалăх-завод ертӳçи В. Семенов пулчĕç.

– Кайса курни куçа уçрĕ, çĕнĕ шухăшсем çуратрĕ. Вĕсене пурнăçа кĕртес пулсан ыррине çеç шанмалла, – терĕ выставкăран таврăннă хыççăн район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Ананьев.

## Çĕр улми выставки

Нарăс уйăхĕн 18-19-мĕшĕсенче Шупашкарта МТВ-центр территорийĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕн пуçарăвĕпе иккĕмĕш хут Раççейри регионсем хушшинчи «Çĕр улми-2010» отрасль выставки иртет. Выставка йĕркелӳçисем: ЧР Ял хуçалăх министерстви, Раççейри ял хуçалăх академийĕн çĕр улмипе ĕçлекен А. Лорх ячĕллĕ наукăпа тĕпчев институчĕ, Чăваш Республикинчи «Агро-Инновация» унитарлă предприяти.

Выставка икĕ енпе ĕçлĕ: Раççейри çĕр улмипе ĕçлекенсем хутшăнакан выставка тата çĕр улмин элитăллă вăрлăхĕпе суту-илӳ тăвасси. Выставкăра пирĕн районти «Ударник» хуçалăх та пулĕ. Элитăллă вăрлăх сутакансем хушшинче «Ударник» тата «Герой» хуçалăхсем пуласси паллă. Юлнă кунсенче унта хутшăнакансем татах пуласса шанас килет.

Выставка шайĕнче иртекен наукăпа практика конференцийĕ çĕр улмипе ĕçлекенсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа та унта кашни хуçалăх агрономĕ-специалисчĕ хутшăнасса шанатпăр. Конференцире çĕр улмипе ĕçлекен ученăйсем «иккĕмĕш çăкăр» туса илес ĕçре вăрлăх хатĕрлессинчен пуçласа çум курăкпа кĕрешесси таранах тĕплĕн каласа парĕç.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

Райадминистрацире

## Пултаруллисене – Хисеп грамоти

***Мăн Сĕнтĕр райповĕн ыйтăвне тивĕçтерсе, потребительсен кооперацийĕн системинче ĕçлесе тунă çитĕнӳсемшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи январĕн 29-мĕшĕнчи 40 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Татьяна Вячеславовна НИКОЛАЕВАНА**, «Дружба» гастроном заведующине;

– **Альбина Лукинична РОМАНОВАНА**, Кĕрекаçри магазин заведующине.

В.В. Путин Чăваш Енре пулнă май

## Трактор тăвакансем патĕнче пулнă

Ĕçлĕ визит вăхăтĕнче РФ Правительствин Председателĕ Владимир Путин «Промтрактор» уçă акционер обществинче те пулса курнă. Вăл «Компания корпоративного управления «Концерн «Тракторные заводы» ООО шутне кĕрет.

«Тракторные заводы» концерн управленийĕнче 20 предприяти ытла. Предприятисем Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче, кунпа пĕрлех Данире, Германире, Австрире, Нидерландире, Сербире тата Украинăра та вырнаçнă. Продукци Раççей рынокĕнче пĕчĕкех мар пай йышăнать. Иртнĕ çулсенче концерн туса ирттернĕ техника политики, производство процесĕсене çĕнĕлле йĕркелени компание техникăн 28 база модельне тата 40 модификацине хатĕрлеме, модельсен тĕсĕсене çуррине ытла çĕнетме, техника сутассине ӳстерме тата пысăк конкурентлă тĕнче рынокне тухма май панă. Концерн аталанăвăн тата интенсивлă çĕнетĕвĕн стратегине тытса пырать: технологи комплексĕсем йĕркелеме рынока инновациллĕ продукци тăратассин программине пурнăça кĕртет.

Чăваш Республикин территорийĕнче холдингăн социаллă пĕлтерĕшлĕ 4 предприятийĕ вырнаçнă: «Промтрактор» ОАО (Шупашкар), «Чебоксарский агрегатный завод» ОАО (Шупашкар), «Промтрактор-Промлит» ООО (Шупашкар), «Промтрактор-Вагон» ЗАО (Канаш).

«Промтрактор» ОАО, бульдозерсемпе çĕр çемçетмелли тата пăрăхсем хумалли хăватлă йывăр техника туса кăларакан пысăк предприятисенчен пĕри пулса тăнă май тата «Чебоксарский агрегатный завод» ОАО, промышленность, ял хуçалăх тата ытти гусеницăллă техникăн куçăм системисем валли запас пайсем, çавăн пекех тракторсемпе комбайнсем, автомобильсем валли сцеплени деталĕсемпе узелĕсем туса кăларнă май, холдингра промышленность машиностроенийĕн шутне кĕреççĕ.

Раççей Правительствин пуçлăхĕ Владимир Путин тата Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров республикăри промышленность предприятийĕсен продукцийĕн выставкипе тата «Тракторные заводы» концерна» кĕрекен предприятисем туса кăларакан машинăсемпе паллашнă.

**Хамăр инф.**

Саламлатпăр



Муркаш ял тăрăхĕнчи Çурлатри ялĕнче пурăнакан **Роза Кузьминичнапа Василий Кузьмич КРЮЧКОВСЕНЕ** февралĕн 12-мĕшĕнче ылтăн туй ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Иксĕлми телей, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх, чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх сунатпăр. Яланах телей çут çăлтăрĕ сирĕн умăрта çутаттăр. Эсир пурри ялан пире савăнтарать.

**Салампа: икĕ ывăлĕ, кинĕсем, икĕ хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, 7 мăнукĕ, прамăнукĕ, тăванĕсем.**



Юратнă хаклă хĕрĕме, мăшăра, ăшă кăмăллă аннене, кукамая, хисеплĕ тăванăма – Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Галина Алексеевна АЛЕКСЕЕВАНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн, ачисемшĕн, питĕ пысăк телей, яланах пире ăс парса пулăшса пыратăн, йывăрлăхсене çĕнтерсе малалла пурăнма вăй-хал парса тăратăн. Эпир яланах сан умра парăмра. Эсĕ яланах çирĕп сывлăхлă пул, ĕмĕрӳ чăваш сурпанĕ пек вăрăм пултăр.

**Саламлаканĕсем: 75 çулхи амăшĕ, мăшăрĕ, икĕ ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, Герасимовсен çемйисем, çывăх тăванĕсем.**



Хаклă мăшăрăма, юратнă аттене, ырă кăмăллă кĕрĕве, Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Вячеслав Федорович ХАРЬКОВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул, тапса тăракан çăл куç пек вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ачисем, хунямăшĕ.**



Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, кукаçие, маçака, тăвана – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Димитрий Сергеевич ГОЛУБЕВА** 80 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр. Çирĕп сывлăхлă пулса ачăрсене, мăнукăрсене савăнтарса татах та нумай çул хушши пурăнмалла пултăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсем, хĕрĕсем, кинĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.**

2010 çулхи халăх çыравĕ

# Хатĕрленӳ ĕçĕсен пĕлтерĕшĕ пысăк

***2009 çулхи сентябрьте РФ Правительстви 2010 çулхи Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕн вăхăтне 2013 çула куçарасси пирки пĕлтернĕччĕ. Сăлтавĕ – ăна ирттерме укçа-тенкĕ çителĕксĕр пулни. Раççей Правительствин Председателĕ Владимир Путин вара 2009 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕнче çырава хатĕрленес ĕçсене çĕнĕрен анлăн пуçарма кирлине палăртрĕ, çырав малтан палăртнă вăхăтрах иртессине пĕлтерчĕ. Октябрь уйăхĕччен вăхăт ытлашши нумаях юлмасть. Хатĕрленӳ ĕçĕсем епле пыраççĕ-ха, çак вăхăта мĕн-мĕн тума ĕлкĕрнĕ тата малашне мĕнле ыйтусене татса пама тивĕ? Çакăн пирки каласа пама ыйтрăм предприятисен статистикин Муркаш районĕнчи пайĕн тĕп специалист-экспертне Зоя Иосифовна ВИНОГРАДОВАНА.***

– Президент Администрацийĕпе Раççей Правительстви халăх çыравне ирттерни патшалăха экономикăпа социаллă аталану тĕлĕшпе йышăнусем тума кирлĕ тесе пĕр хут кăна мар пĕлтернĕ. Кризиса пула социаллă ыйтусем мала тухаççĕ. Кивĕ статистика даннăйĕсем вара йышăнусен пахалăхĕ çине тӳнтерле витĕм кӳреççĕ. Халăх çыравĕ 2010 çулхи октябрь уйăхĕн 14–25-мĕшĕсенче иртет, унăн итогĕсене вара 2011 çулхи пĕрремĕш кварталтах пичетлесе кăларĕç.

Çыравăн кирлĕлĕхĕ мĕнреха? Чи малтанах вăл комбинациллĕ кăтартусем илме май парать. Çапла майпа пĕчĕк ял таранах çынсен пурнăçне хак пама май пур. Çырав ирттернипе кăна кашни ялпа, пĕтĕмĕшле çĕршывĕпе мĕн чухлĕ çемье, çемье членĕсем, çемьесенче хăш ӳсĕмри ачасем мĕн чухлĕ пулни, ачасен пурнăç условийĕсем, мĕнле тупăшпа тăранса пурăнни, демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăру пирки тата ытти тĕлĕшпе тулли сведенисем илме май пур. Ку сведенисем вара социаллă тата çемье политикин патшалăх программисене хатĕрлеме тата пурнăçа кĕртме питĕ кирлĕ.

Çырава хатĕрленсе нумай ĕç туса ирттернĕ ĕнтĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, çырав валли пурлăхпа техника базине хатĕрлесе çитернĕ, пурăнмалли çуртсене инвентаризациленĕ т. ыт. те. Çак ĕçсем районта календарлă планпа пăхнă пек пулса пыраççĕ. 2009 çул валли пăхса хунă хатĕрленӳ ĕçĕсене пĕтĕмпех пурнăçланă.

Иртнĕ çул чи пĕлтерĕшлĕ ĕçсенчен пĕрне вĕçлерĕмĕр – ялсенчи çуртсен списокне туса пĕтертĕмĕр. Регистраторсем çуртсен списокĕсене тĕрĕслесе тухрĕç, картографи материалĕсем вырăнсенчи çурт-йĕрпе пĕр килнине палăртрĕç. Регистраторсем пулса ĕçлеме вăхăтлăх 24 çынна явăçтарнă. Виçĕ эрне хушшинче вĕсем кашни ялтах пулчĕç, карттăсем çинче кашни çурт ăçта вырнаçнине палăртрĕç, çĕнĕрен туса лартнисене унта кĕртрĕç, сӳтнисене е çунса кайнисене кăларчĕç. Çак çĕнĕ даннăйсемпе усă курса çĕнĕ картографи материалĕ хатĕрленĕ. Малтанхи даннăйсемпе районта 177 ял, 14320 çурт-йĕр, пурăнмалли тата пурăнмалли мар 14336 строени, пурăнмалли пӳлĕмсем (хваттерсем, пӳлĕмсем) 15309 шутланаççĕ, ялан пурăнакан çынсем 36244-ăн.

Шутлав участокĕнчи çырав даннăйĕсене пухакан пĕр çын пуçне 400 çын тивмеллине шута илсе, çырав участокĕсене 6, шутлав участокĕсене 91, инструктор участокĕсене 23 тата стационарлă участоксене 12 йĕркеленĕ.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**